*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

26 (2613) №
Хакĕ ирĕклĕ

# Хресчен сасси

2016
утă
7

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН

*УТÇИ*

# Пĕр шухăшпа, пĕр тĕллевпе



Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

**"Ирхине 6 сехет çурăрах уй-хире килеççĕ, çиччĕре ĕçе пикенеççĕ. Вара каçхи 8 сехетчен те таврăнмаççĕ. Пирĕн механизаторсемшĕн утçи – явăплă тапхăр", – палăртрĕ Канаш районĕнчи Киров ячĕллĕ ЯХПКан тĕп агрономĕ Василий Петрович Павлов.**

Урăхла мĕнле пултăр? Ку ял хуçалăх предприятийĕ çур района тытса тăрать темелле. Выльăх-чĕрлĕх йышĕпе те (мăйракаллă шултра выльăх 1000 пуç ытла, çав шутра сăвакан ĕне 500 пуçран иртет), вăл паракан продукци калăпăшĕпе те унпа танлашаканни çук. Тухăçлăха çухатас мар тесе кашни ĕçчен яваплăха туйса вăй хурать. Ăнăçуçитĕнÿ хуçалăха 36 çул ертсе пыракан Николай Степанович Андреевран нумай килнине пытармаççĕ ĕçченсем. Юлашки вăхăтра чирлекеленĕрен тата отпускра пулнăран унăн тивĕçĕсене Герман Георгиевич Владимиров (хальччен хуçалăхра тивĕçтерÿ енĕпе менеджерта ĕçленĕскер) пурнăçлать. Кăçалхи утçи ун çине тиеннĕ. Эпир çитнĕ кун вăл çулçÿреввеччĕ, çавăнпа вырăнти лару-тăрупа пире тĕп агроном паллаштарчĕ.

Василий Петрович та хуçалăхра çĕнĕ çын иккен, анчах ку таранччен уйхирте ĕçлемен мар. Хăй вăхăтĕнче "Цивиль" ял хуçалăх предприятийĕнче 15 çул агрономра тăрăшнă. Юлашки çулсенче çĕр ĕçченне Мускав тăрантарнă. Унта пурнăç йывăрлансан каллех çĕр патне таврăннă. Киров ячĕллĕ хуçалăхра пуш уйăхĕнчен пуçласа вăй хурать.

Паянхи кун тĕлне кунта утçин пĕрремĕш тапхăрне вĕçленĕ темелле. Ку тăрăхра çумăр çуманран пÿлмене типĕ утă кĕнĕ, траншейăсене те кĕске вăхăтра пахалăхлă сенаж хывнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан утçие хутшăннă трактористсем çĕнĕ ĕç йĕркине суйласа илнĕ. Хальччен кашни кун ирхине 7-8 сехетрен пуçласа каçхи 5-6-ччен тăрăшнă, çумăрлă кунсенче кăна канма май пулнă. Уяр çанталăкра ял çынни те килти ĕçе пурнăçлама ĕлкĕресшĕн. Хуçалăхран уйрăлайманни çапла тума май паман. Кăçал вара ирхине 7 сехетрен пуçласа каçхине çак вăхăтчен тăрăшса вырсарникунсерен канма йышăннă. Унсăр пуçне шалу тĕлĕшпе яланхиллех хавхалантарни те васкаварлăрах пулма пулăшнă. Тĕслĕхрен, пĕр сенаж траншейине 5 кунта тултарсан вĕсем премие тивĕçнĕ. Çавăнпа сехете пăхман, палăртнинчен каярах юлса та ĕçленĕ. Премие шута илмесен кулленхи ĕç укçи хĕрÿ тапхăрта пĕр пин тенке яхăна ларнă. Ытти вăхăтра та хуçалăх механизаторĕсене кÿрентермеççĕ – шалу кунсерен 600-700 тенкĕпе танлашнине асăнчĕ агроном.

Выльăх апатне кăçал та ытлă-çитлĕ хатĕрлесси иккĕлентермест ăна. Утăлăх курăк айлăмра самай çÿллĕ ÿснĕ, тепĕр вырăнта тавăрмалăх та çук тейĕн – çÿпçÿхе сий, анчах пĕтĕм лаптăкран саппаслăх та пуçтарăнĕ. Унсăр пуçне кукурус тухăçне шанать Василий Петрович. Малтанхи çулсенче ăна 120-130 га акнă, кăçал лаптăка планпа пăхнинчен ытларах ÿстернĕ, 170 га çитернĕ. Ăна улăмпа хутăштарса силос хатĕрлеççĕ. Выльăх йышлăран хуçалăх улăма уйра хăвармасть, йăлт пуçтарса усă курать. Сухаласа çĕре варсан усăллăрах пулмĕччĕ-ши тетĕр-и? Капла аван пулнине специалист ăнланать, анчах çĕр пулăхлăхне кунта урăхла майпа тавараççĕ. Пусă çавраннăшĕнчи "канакан" лаптăк çине тислĕк кăлараççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа унта 15 тонна турттарнă.

"Кукуруса кашни гектартан сахалтан та 300 центнер пуçтарса илсен выльăх апачĕ тата 51 тонна хушăнĕ.

2-мĕш стр. ➔

# Конкуренцие аталантарассипе

**Конкуренцие аталантармашкăн пулăшасси регион пуçлăхĕсен тата ĕç тăвакан органсен тĕп тĕллевĕсенчен пĕри шутланать.** Çакăн тăрăх вырăнти ертÿçĕсен ĕç тухăçлăхне те хаклаççĕ. Конкуренци политикине йĕркелесе пурнăçа кĕртессипе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче Конкуренцие аталантармалли стандарт пысăк вырăн йышăнать.

**2015 çул кăтартăвĕсемпе тунă рейтингпа Чăваш Ен ку тĕлĕшпе малта пыракан вунă регион шутне кĕнĕ, 6-мĕш вырăн йышăннă.** Стандарта пурнăçа кĕртессипе республикăра нумай ĕç пурнăçланă. Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илÿ министерстви (стандартшăн вăл явăплă) тăрăшнипе мероприятисен планне çирĕплетнĕ, вырăнти хăйтытăмлăх органĕсемпе килĕшÿсем тунă, приоритетлă тата социаллă пĕлтерĕшлĕ тытăмсен списокне палăртнă, пĕлтĕрхи пуш уйăхĕнче "Электроçыхăну сферинчи конкуренцие аталантармалли плансен мониторингĕ" темăпа çавра сĕтел йĕркеленĕ тата ытти те.

# Парне – «Лада-Гранта»

**Çулçÿрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцине йĕркеленĕренпе 80 çул çитнĕ май Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче савăнăçлă мероприяти иртрĕ.** Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăннă. Вăл тата ЧР шалти ĕçсен министрĕ Сергей Неяскин регионти çулçÿрев хăрушсăрлăхĕн инспекцийĕн подразделенийĕсене 15 çĕнĕ патруль автомашинин уççийĕсене пачĕç. Çакă çулсем çинчи патруль службишĕн пысăк парне пулчĕ. Çулçÿрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Романов автопарк çĕнелни ĕç пахалăхне ÿстерессе шантарчĕ.

Çулçÿрев хăрушсăрлăхĕн инспекцийĕн чи пултаруллă ĕçченĕсем наградăсене тивĕçрĕç.

# Сĕтеклĕ апат – пысăк сăвăм



Сăнÿкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

Çу кунĕсем – çĕр ĕçченĕшĕн хĕрÿ тапхăр. Ака-суха вĕçленсен сывлăш çавăрса илчĕ кăна вăл каллех уйхире васкарĕ. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма апат сахал кирлĕ-им? Етĕрне районĕнчи хуçалăхсен мĕнпур техники курăк çинче. Утă уйăхĕ тĕлне районта нумай çул ÿсекен курăксене 9420 гектар çинче çулнă (82,3 процент). Çак вăхăт тĕлне 96 480 тонна утă хатĕрленĕ (144 процент). Сенаж – 9760, силос 624 тонна хывнă. Уй-хирте выльăх апачĕ хатĕрлекен 25 комбайн, 50 косилка ĕçлет.

# Çĕнĕ, такăр çул

**Çак шăматкун Патăрьел районĕн кунне паллă тăваççĕ.** Уявра Ксыл-Камыш ялĕнчи çĕнĕ урамра автомобиль çулĕ хута каймалла. Ăна пĕлтĕрхи чÿк уйăхĕнче тума пуçланă. Иртнĕ çул подряд организацийĕ 5100 пин тенкĕлĕх ĕç тунă, кăçал – 5681, 02 пин тенкĕлĕх.

Хальхи вăхăтра объектра строительство ĕçĕсем вĕçленнĕ.

**ХАКЛĂ ВУЛАКАНСЕМ!**

**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене II çур çулшăн çырăнма ĕлкĕреймерĕр пулсан – ан пăшăрханăр. Утă (июль) уйăхĕн 25-мĕшĕччен çырăнсан – вĕсене çурла (август) уйăхĕнчен илсе тăма пуçлатăр.**


Людмила Ларионова

# Асрах-ха çăкăр шăрши

"Пĕлетĕр-и, Карапай Шăмăршă пекарнинчен пиçсе тухакан çăкăрăн ырă шăрши таврана мĕнлерех сарăлнине? Сăмсана йĕкĕлтетчĕ, чуна ăшăтатчĕ, халĕ те тути çăварта", – пĕрин хыççăн тепри сăмах хушма тăрăшаççĕ кинемейсем. Вĕсен шухăшĕпе халĕ лавккара сутăнаканнине ĕлĕкхипе танлаштараймăн.

"Карапай Шăмăршă çăкăрĕ мĕнпе уйрăлса тăнă пек туйăнать вара? Вăрттăнлăхĕ мĕнре?" – ыйтатăп эпĕ халăхра асра юлнă пекарньăра чĕрĕк ĕмĕр тăрăшнă Лидия Ивановна Ларионовăран. "Эпир кăвас чустине йўçĕтме пĕлнĕ. Çăкăр тутлă пултăр тесен ăна ытларах çăрмалла", – тет вăл.

Халĕ пекарньăсенче чустана ятарлă машинăсемпе çăраççĕ. Ĕлĕк ку ĕçе час-часах алă вĕççĕн пурнăçланă. Тен, çавăнпа Карапай Шăмăршăсен çăкăрне пысăк автомашинăсемпе аслă çула тухнă водительсем те туянма васканă. Тĕрлĕ хуларан пулнă вĕсем. Ял çынни пĕçернĕ ырă шăршăллă çăкăра Мускавра та тупса илеймĕн тенĕ.

Лидия Ивановнăна пĕрле ĕçлекенсем те, ертўçĕсем те хисепленĕ. Хĕрарăм чылай наградăна тивĕçнĕ. Паян вăл ырă шăршăллă, тутлă çăкăра килĕнче пĕçерсе тăванĕсене савăнтарать.

**Ирина ПАВЛОВА. Шăмăршă районĕ.**

# Пĕр шухăшпа, пĕр тĕллевпе

1-мĕш стр.

Унсăр пуçне улăм виçи те массăна ўстерĕ. Çывăх вăхăтра пĕр çул ўсекен курăкран тырă сенажĕ хатĕрлеме тытăнăпăр", – маларах палăртса хунă тĕллеве тепĕр хут тишкерчĕ агроном.

Хуçалăхра вăй хуракан механизаторсем дисциплинăна пăхăнни çав тери пĕлтерĕшлĕ. Рейса та вĕсене сывлăха тĕрĕслесе кăлараççĕ. Ĕçе мухмăрла тухасси пирки шухăшламалли те çук. Ку çеç-и? Юн пусăмĕ нормăран иртсен те медицина ĕçченĕ руль умне ларма ирĕк памасть. "Пĕррехинче çапла трактористăн юн пусăмĕ пысăкчĕ. Хăй ăнлантарнă тăрăх – унăн яланах çапла-мĕн, йăхранах пырать. Медицина сестри ăна ĕçе кăлармастăп тет. Хут çырса яваплăха хам çине илсен кăна ирĕк пачĕ, кунĕпех трактористь хыççăн çўреме тиврĕ", – аса илчĕ Василий Петрович.

Вăл асăннă тăрăх – кадрсем тĕлĕшпе пысăк йывăрлăх çук. Техника чăхăмласан ăна юсама инженер, механик, слесарь, тимĕр шăратакан та пур. Уя тухса та, машина паркĕнче те тухăмрах пулăшаççĕ. Пĕр механизатора темиçе техника шанса пани те пулать. Ĕçе вырнаçакан унăн тракторĕ çине тўрех ларайм асть. Техника темиçе çын аллине лексен часах стройран тухма пултарать, çакă инженера шиклентерет-мĕн.

Хуçалăхра юлашки вăхăтра çĕнĕ дисклă сўре туяннă. МТЗ тракторсем хальлĕхе япăх мар ĕçлеççĕ, çавах та техника паркне çĕнетсе тăрсан аван пулмаллине палăртать агроном. Кăçал курăк çулма икĕ комбайн тухнă, тепĕрне вырăнтан тапратаймăн. Анчах утçин пирвайхи тапхăрне вăраха яман.

Станислав Волков, Василий Семенов, Андрей Морозов, Василий Алексеев, Александр Алексеев пек маттурсем утта кĕске вăхăтра çулса, тавăрса, прессласа, тиесе турттарнă. "Нумай çул ĕçлеççĕ, опытлă, хушнине итлеççĕ", – ыррине кăна асăнчĕ вĕсем пирки Василий Павлов.

**Ирина НИКИТИНА.**

# Республика уй-хирĕнче

## (утă уйăхĕн 4-мĕшĕ тĕлне)

Кăçал республикăри хуçалăхсене выльăх-чĕрлĕхе ытлă-çитлĕ хĕл каçарма утă – 590 пин, сенаж – 170 пин, силос 200 пин тонна кирлĕ пулать. Сĕтеклĕ апат хатĕрлеме çĕр çителĕклех. Тырă фуражĕ кăна çитсе пымасть. Çулсерен сысна комплексĕсемпе чăх-чĕп фабрикисем валли 160-170 тонна тырă фуражне аякран турттарма тивет.

Выльăх апачĕн культурисем акнă лаптăксен 40-45 процентне йышăнаççĕ. Ытларах пайĕ (80 процент таранах) – малтан акса хăварнă нумай çул ўсекен курăксем.

Выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ те паха апат хатĕрлеме тăрăшмалла. Апла кашни культурăна вăхăтра пуçтарса илмелле, технологие пăхăнса хывмалла. Пахалăхĕ 1-2 класран кая пулмалла мар.

Утă уйăхĕн 4-мĕшĕ тĕлне республикăра 77,7 пин гектар çинче нумай çул ўсекен курăксем çулнă. Утă – 62,9 пин (87,3 процент), сенаж – 130,3 пин (76,6 процент), силос 8,5 пин тонна (4,2 процент) хатĕрленĕ. 125 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ пур. Улатăр, Йĕпреç, Канаш, Куславкка, Комсомольски, Пăрачкав, Вăрмар, Шăмăршă, Етĕрне районĕсенче утă палăртнинчен ытлашшипех типĕтнĕ. Сенаж хывассипе Элĕк, Патăрьел, Красноармейски, Вăрмар районĕсенче хастар ĕçлеççĕ. Комсомольски районĕсĕр пуçне ыттисенче пĕр çул ўсекен курăксем çулма тытăннă.

Çак тапхăрта Етĕрне районĕ 1 условлă выльăх пуçне 15,7 центнер апат единици янтăланă. Вăрмар (14,9 ц), Красноармейски (14,4 ц) районĕсен кăтартăвĕсем те пысăк. Çав вăхăтрах Çĕмĕрле тăрăхĕнче вăл 9 центнер кăна.

# Ял хуçалăхне аталантарма

ПĔТĔМ РАÇÇЕЙРИ ЯЛ ХУÇАЛĂХ ÇЫРАВĔ 2016

**Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ пуçланчĕ. Вăл çурла уйăхĕн 15-мĕшĕччен пырать.** Республикăри çыравçăсем те çула тухрĕç. Кăçал вĕсен 4 пин – фермер, 239 пин – ялти, 9 пин хулари уйрăм хуçалăхсене, граждансен коммерциллĕ мар 746 пĕрлешĕвĕнчи 9780 участока шута илмелле. Хальхи вăхăтра мероприятие Чăваш Енре 658 çынна явăçтарнă, çав шутра 563 çыравçăпа 95 инструктор. Пурне те вĕрентсе хатĕрленĕ, ятарлă тумпа, ĕç хатĕрĕпе тивĕçтернĕ. Вĕсем çыравччен хăйсене çирĕплетсе панă участоксем тăрăх шута илмелли объектсене çитнĕ, респондентсемпе тĕл пулмалли график хатĕрленĕ, ăнлантару çыравне хăварнă.

**Çырав тĕллевĕ – çĕршыври аграри ресурсне туллин те тĕрĕс тишкересси, çав шутра пирĕн республикăра та.** Чикĕлеш енчен апат-çимĕç турттарассине чакарнă май çак сведенисем уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Раççей халăхне вырăнта туса илнĕ паха та таса апат-çимĕçпе тулли тивĕçтерни наци сывлăхне çирĕплетет, ку енĕпе ютсен куçĕнчен те пăхмăпăр.

Кăтартусемсĕр ял хуçалăх отраслне малалла аталантармашкăн тивĕçлĕ мерăсем йышăнма йывăр. 2006 çулхи çырав хыççăн çĕршывра акă «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ, программăсем йышăнчĕç. Фермер хуçалăхĕсем, çемье фермисем патшалăх пулăшăвĕпе вăй илчĕç. Хушма хуçалăхсем çăмăллатнă кредитпа усă курма тытăнчĕç. Вите-сарай çĕнет-рĕç, çĕр техники, выльăх-чĕрлĕх туянчĕç. Вĕсенчен фермер хуçалăхĕ йĕркелекенсем те самай. Ялăн социаллă пурнăçĕпе экономикине лайăхлатассипе курăмлă утăмсем тунă.

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, малаллах шăвать. Вунă çул каялла çыравра пуçтарнă сведени кивелнĕ, паянхи пурнăçа тивĕçтермест. Малалла сулмаклă утăмсем тума çĕнĕ те тĕрĕс кăтартусем кирлĕ. Унсăр çĕр ĕçченне тивĕçлипе пулăшаймăн.

Шел, мероприяти пирки халăха май çитнĕ таран ăнлантарма тăрăшнине пăхмасăр унăн пĕлтерĕшне тĕрĕс мар хаклакансем те пур-ха. Хăшĕ-пĕрин шухăшĕпе хушма хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх йышне, усă куракан çĕр виçине, сад-пахчари улма-çырла йывăç-тĕмне ĕлĕкхи пек налук хушса тўлеттермешкĕн шута илеççĕ имĕш. Ку тĕрĕс мар! **Федераци саккунĕпе килĕшўллĕн хуçалăхăн пĕчĕк мар формисене хушма налук хумаççĕ. Çырав тĕллевĕ – ял хуçалăхĕнчи хальхи лару-тăру пирки тĕрĕс кăтартусем пухса ăна малалла аталантарма мерăсем йышăнасси.** Апла çыравçă пырсран, ыйтусене хуравлама хăрамалла мар. Çĕршывĕпе пĕлтерĕшлĕ мероприятие хушма налук хурассишĕн ирттермеççĕ. Тĕн ĕненĕвĕ те çыравран пăрăнмалли сăлтав мар. Халăхра иккĕленўллĕ шухăшсене сирме ăнлантару ĕçне татах вăйлатмалла. Вырăнти влаç органĕсен уйрăмах пуçарулă пулмалла, çырав ял пурнăçне, ĕçĕхĕлне лайăхлатма пулăшнине ĕнентермелле.

Паллах, кирек мĕнле ĕçре те чăрмавсăр мар. Федерацин патшалăх статистика службин территори органĕн ертўçи Эльвира Максимова сăмахĕпе хальхи вăхăтра инструкторсен – 2, çыравçăсен 4 процентĕ çителĕксĕр. Хатĕрленў тапхăрĕнче вĕсем çителĕклех пулнă-ха, анчах ĕç йывăррине, яваплăх пысăккине кура хăшĕпĕри малтанхи кунсенчех пăрахса кайнă. Шăрăх çанталăкра планшетлă компьютер чăхăмлани, çыравçăсем респондентсемпе тўрех пĕр чĕлхе тупайманни тата ытти те ура хурсах тăнă. Çапах йывăрлăхсене пăхмасăр ĕç малаллах пырать. Хальхи вăхăтра инструкторсен 95 участокĕ пур. Вĕсене пўлĕмсемпе, сĕтел-пуканпа, çыхăну хатĕрĕпе, техникăпа тивĕçтернĕ. Мероприяти валли федераци хыснинчен 6 млн тенкĕ куçарса панă.


Сăнўкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

*Куславкка районĕнчи Петровсен фермер хуçалăхĕнче*

Çырав куллен кун вăй илсех пырать. Патшалăх пĕлтерĕшлĕ мероприятие пурне те хастар хутшăнма, ыйтусене тĕрĕс хуравлама ыйтатпăр. Ăна çĕр çыннин ырлăхĕшĕн ирттернине манас мар. Кăтартусем унăн пурнăçне, ĕçĕ-хĕлне туллин уçса паччăр.

**Лариса НИКИТИНА.**

ШĂПА

# Сакки сарлака та – ĕмĕрĕ кĕске

**Типтерлĕ тумланнă, ăш пиллĕ кинемей алăкран тухсах кĕтсе илчĕ. Çĕрпӳри çĕнĕ çуртра пурăнать Мария Александрова: «Чирлерĕм-ха, юрать тăвансем пăхса тăраççĕ. Пĕччен кичемрех», – калаçрĕ вăл хĕтлă та илемлĕ хваттерне кĕтартнă май.**


Автор сăнӳкерчĕкĕ

Мария Александрова



Мускавра (варринче – Мария Александрова)

## Ĕçрен кайнăшăн – тĕрмене

Мария Александровна 1926 çулхи ака уйăхĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Нĕрĕшре йышлă çемьере çуралнă.

– Пирĕн килте 10 ача пулнă. Анчах улттăшĕ пĕчĕклех чир-чĕре пула вилчĕç. Ун чухне йĕркеллĕ çиме, чирлесен сипленме майсем пулман çав. Халĕ шăллăмпа иксĕмĕрех юлтăмăр. Йăмăкпа тепĕр шăллăм та вилчĕç, – сăмах çиппине сӳтме пуçларĕ Мария Александрова. – Вăрçă пуçланнă çул эпĕ 15-ре пулнă, 7 класс пĕтернĕччĕ. Пире ФЗО-на яма комиссие чĕнтерчĕç. Пĕр пек ят-хушаматлисем виççĕннччĕ эпир. Сусăрсемпе арпаштарса мана та ямарĕç. 1943 çулта çапах Владимир облаçне торф кăларма ăсатрĕç.

Тăвата çул нушалантăмăр унта. Выçăллă-тутăллă пурăнсах норма тултарнă. Ун чухне пĕр стакан çăнăх 70 тенкĕ тăнă. Кукурус çăкăрне 3-4 куна 600 грамм паратчĕç. Пĕр каçрах çисе яраттăмăр ăна. Кайран выçă ларнă. Яшки те ячĕшĕн кăна пулнă. Начарланса, пыйтланса кайрăмăр. Пĕрре атте килчĕ те мана паллаймарĕ. Бараксенчен пĕринче тыткăна çакланнă нимĕççем пурăнатчĕç. Вĕсене те ĕçе илсе каятчĕç. Каялла наçилкка çине хурса таврăнатчĕç. Кашни кун çын вилетчĕ. Ӳчĕсене шурлăха пăрахса хуратчĕç.

Терт-нушана чăтаймасăр тарса килтĕм. Вăрçă пĕтнĕ пулин те йĕрке çирĕпчĕ ун чухне. Хупса лартасран хăраса тăлăха качча тухрăм. Тимофеев Серапенпа 1,5 çул кăна пурăнтăмăр. Эпĕ ăна килте курман та. Вăл Çĕрпӳри больницăра кунĕн-çĕрĕн лашасем пăхнă. Ун чухне мĕнпур ĕçе урхамахпа тунă. Упăшка йывăр чирленĕ, анчах мана каламан. Пирĕн Василий çуралчĕ. Ашшĕ чăтайман, çемьепе пĕрле пулас килнипе никама каламасăрах ĕçрен пăрахса килнĕ. Çакăншăн ăна 3 уйăхлăха хупса хучĕç.

Пус çумне пус хушса укçа пуçтартăм. Вăл тухнă тĕле тумтир илесшĕнччĕ. Вăрмана вутă патне кайсан упăшка тăванĕсем çĕрулмине, арчари 720 тенкĕ укçана вăрланă. Милицие чĕнтерсен çĕрулмине каялла пырса панă, укçине – çук. Милици те шырамарĕ: «Эсĕ вăрланине курман. Хăрамастăн-и калама?» – терĕç те ĕçе хупрĕç. Упăшка тĕрмерен тухсан кĕçех вилчĕ. Çур çулти ачапа юлтăм.

Кăнтăрла колхозра сысна пăхнă, каçпа авăн çапма тухнă. Ир енне таврăннă та каллех фермăна утнă. Ачана анне пăхатчĕ е киле хупса хăварнă. Кӳршĕсем пырса илсе каятчĕç, тăрантаратчĕç.

1951 çулта Çĕнĕ Катекри Григорий Васильева качча кайрăм. 16 çул пĕрле пурăнтăмăр. Вăрçăра аманнăскерĕн хăрах ӳпки пулман. Виçĕ ача çуратса ӳстертĕмĕр: Николай, Алексей, Геннадий. Паянхи куна Николайпа Геннадий кăна пурăнаççĕ. Василипе Алексей вăхăтсăр вилчĕç.

Сурт-йĕр юхăнса çитнипе 1961 çулта çĕнни лартма шухăшларăм. Ĕне сутрăм, ссуда, çынсенчен кивçен илтĕм. Василий Караганда хулине вĕренме кайнăччĕ. Мана вăрçать: «Тăваймастăн вĕт, мĕншĕн тытăнтăн?» – тет. Ун чухне упăшка та пурăнать, анчах чирлĕскер ĕçлеймест. Туса пĕтертĕм. Çĕнĕ çурта куçсан мăшăр вилчĕ. Парăмсене мĕнле татмалла? Ачасем çăвĕпех колхозра ĕçлерĕç. Вĕсен укçине, хамăн шалăва хушрăм та парса татрăм.

## Мускаври куравра

Мария Александрова ĕмĕрĕпех сысна пăхнă. Юлашки çулсенче «Опытный» хуçалăхра тăрăшнă. Ĕçчен те вăр-варскер районта та малтисен ретĕнче пулнă.

– 70-мĕш çулсенче Пĕтĕм Раççейри Халăх хуçалăхĕн çитĕнĕвĕсен куравне фермăн 4 сыснине илсе кайма ыйтрĕç. «Каймастăп, эпĕ унтан чĕрĕ таврăнаймастăп», – тетĕп ферма заведующине. Ун чухне куравра вырăнсене çулталăкĕпех усранă. Нивушлĕ манăн та çапла пурăнмалла? Аптранипе Людмила кинпе канашларăм. «Янă чухне кай, ним курмасăрах вилетĕн», – терĕ те килĕшрĕм.

Куравра кунĕпе халăх çӳретчĕ. Çĕршыври тĕрлĕ кĕтесрен вырăнсем илсе пынăччĕ. Çимелли, пурăнмалли пурччĕ. Анчах чун килех туртатчĕ. Тунсăхласа çитсен йĕреттĕм. Зоотехник хĕрхенипе киле яратчĕ. Тĕп хулана çуркунне кайнă та хура кĕркунне таврăннă.

Тăватă çул çапла Мускава çӳрерĕм. Ĕç вĕçленсен лавккасене ялала илме чупаттăмăр. Пĕррехинче пушмак туянма кайсан черетре 700 çын тăтăмăр. Ун чухне лавккасенче ирĕклĕн нимĕн те сутман. Экскурсисене илсе каятчĕç. Ленин мавзолейне темиçе хут та кĕрсе курнă. Пенсие тухсан курав центрĕнчен илемлĕ тутăр, сăмавар, пăхăр медаль ярса пачĕç. Ĕмĕрĕм сысна пăхса иртрĕ. Йывăр ĕçпе çемьене тăрантарнă, ачасене ура çине тăратнă.

Нушаланса лартнă çурта шăллăма йӳнĕпех сутрăм. Ют çын мар, тăван-çке. Манăн упăшкасем лайăх пулнă. Пĕри те ятлаçса-кăшкăрса курман. Хам та ĕçкĕçикĕпе аташман. Çак тарана çитсе те икĕ черкке кăна эрех сыпса курнă. Ватăлнă май ывăлăмсем пăхаймасран та хăрарăм. Ваттисен çуртне кайса вырнаçрăм. Çамрăксене чăрмантарас килмест. Паллах, тăвансем çилленчĕç çакăншăн.

Нумай пулмасть мана, тăлăх салтак арăмне, чаплă хваттер пачĕç. Терт-асап хыçа юлчĕ. Пурăнмалла та пурăнмалла. Шел, сакки сарлака та ĕмĕрĕ кĕске.

Мария Александровăн наградисене ятарлă рамăна вырнаçтарнă. Ăна мăнукĕ туса панă-мĕн. Хĕрлĕ пусма çине ĕçри çитĕнӳсемшĕн панă, ĕç ветеранĕн, ВДНХ тата ытти медале типтерлĕн çыпăçтарнă. «Иккĕшне вăрласа кайрĕç», – терĕ кинемей хаклă пурлăхне сăнана май.

Мана тӳрĕ çул кăтартмашкăн урама пĕрлех тухрăмăр унпа. Янкăр хĕвелпе кинемей пичĕ те ăшшăн çуталчĕ. «Çĕр çулчченех пурăнасчĕ-ха», – терĕ ĕç ветеранĕ кăмăллăн.

ХИСЕП

# Ячĕ юлчĕ халăхра





Василий Кузьмин сăнӳкерчĕкĕсем

**Ĕç çыннин çулталăкĕнче Чăваш наци музейĕнче Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхоза ертсе пынă, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченне Аркадий Айдака халалласа курав йĕркеленĕ.** Унăн авторĕ, Чăваш наци музейĕн фончĕн тĕп управçи – Татьяна Гринева. Курава экспозицисемпе пуянлатма Аркадий Айдак мăшăрĕ Людмила Андреевна тата хĕрĕ Люция пулăшнă. Вĕсем çывăх çыннин докуменчĕсене, сăнӳкерчĕкĕсене, наградисене, япалисене курав валли панă.

Аркадий Айдак Етĕрне районĕнчи Чурпай ялĕнче 1937 çулхи çĕртме уйăхĕн 7-мĕшĕнче çуралнă. Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтернĕ. 1964-2007 çулсенче «Ленинская искра» хуçалăха ертсе пынă. Çак тапхăрта колхоз самай аталанса çĕкленнĕ. Вырăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе, хăмла, тырă туса илессипе çĕршывĕпех палăрнă. Ертӳçĕ пуçарăвĕпе эрозие хирĕç çырма-çатрасене 45 гектар лаптăк çине çамрăк хунавсем лартнă. Халĕ кунта самай пысăк вăрман кашласа ларать. 100 гектар çинче 60 пĕве пĕвеленĕ. Аркадий Айдак çут çанталăк пуянлăхĕпе тухăçлă усă курассипе, тăван тавралăха сыхлассипе, ялан хуçалăх производствине, ялан социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантарассипе чылай ĕçленĕ.

2007 çулта ку тăрăхра «Ачак» этнопарк йĕркеленĕ.

1985 çулта ертӳçĕ тăрăшнипе Ачакра «Хресчен çурчĕ» музей уçалнă. Унăн тĕллевĕ – чăваш йăли-йĕркине, культурине упраса хăварасси, ыттисене паллаштарасси. Шкул, санатори, клуб çурчĕсене йăлтах колхоз шучĕпе тунă. Куравра ертӳçĕн, хуçалăхăн çитĕнĕвĕсемпе туллин паллаштарнă.

Фойере лаша кӳлмелли хатĕрсене те асăрхама тӳр килчĕ. «Ленинская искра» колхозра хăй вăхăтĕнче ăратлă лашасем те усранă. Ачакра лаша спортне аталантарнă, шкул ĕçленĕ. Ертӳçĕ çапла майпа ача-пăчана вырăнăхчĕрлĕхпе туслашма, юратма вĕрентнĕ.

Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн наградисем те туллиех. Аркадий Айдака Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, «Хисеп Палли» орденсем, «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медалĕ, Хисеп грамотисем, Тав хучĕсем парса чысланă. Куравра вĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Экспозицисем пултаруллă çынпа, унăн манăçми ĕçĕ-хĕлĕпе, хуçалăхĕпе тĕплĕ паллаштараççĕ. Сăнӳкерчĕксем, документсем çакна çирĕплетеççĕ, анлăрах уçса параççĕ. Ĕçчен çын ĕмĕр мухтавра. Вăл пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă пулин те унăн ырă ĕçĕ манăçмасть.

**Кăларăма Лариса НИКИТИНА хатĕрленĕ.**

# Парăмлă хваттер

**Хваттер туянтăм. Вăхăт иртнĕ май унччен хуçа тĕп юсавшăн тӳлеменни, парăм самай пуçтарăнни палăрчĕ. Вăл вара парăма татма килĕшмест. Уншăн камăн тӳлемелле?**

**Сергей ВАЛЕЕВ. Етĕрне районĕ.**

Парăм хуçи çинче мар, хваттер çинче шутланса тăрать. Харпăрлăх прави теприн çине куçсан та нумай хваттерлĕ çурта тĕпрен юсама каякан тăкака çĕнĕ хуçан саплаштармалла. Çав шутра тӳлемен взноса та.

# Паспорт çухатсан

**Пасарта паспорт çухатрăм. Тен, кăларса илчĕç. Илтнĕ тăрăх – ют паспортпа ултала-са кредит илекенсем те пур. Манăн мĕн тумалла-ши?**

**Марина ТИХОНОВА. Элĕк районĕ.**

Паспорт ултавçăсен аллине çаклансан ыррине кĕтеймĕн. Çавăнпа документа çухатнине полицие пĕлтермелле. Сирĕн паспортпа кредит илсен те хăвăр çинчен яваплăха сиретĕр. Документа вăрланине йĕрке хуралне çийĕнчех пĕлтерни укса-тенке перекетлеме те пулăшать. Паспорт çĕнĕрен тунăшăн тӳлемелле мар. Документа регистраци тунă вырăнпа тепĕр хут илес пулсан ăна 10 кунра хатĕрлесе параççĕ. Енчен вăхăтлăх прописКăпа тăвас тесен 30 кун кĕтмелле. Çак тапхăрта вăхăтлăх удостоверенипе çӳреме пулать.



# Яла таврăнсан

**Çу кунĕсенче ялта пурăнма килĕштеретĕп. Тивĕçлĕ канăва тухнă май ирĕклĕрех. Кăçал кĕрччен хулана таврăнасшăн мар. Пенси илме те вĕçĕмех унта çӳрес килмест: ывăнтарать, тăкаклă. Çак ыйтăва мĕнле татса памалла-ши?**

**Валерий ДОЛГОВ.**

Пенси уксине тĕрлĕ мелпе илме пулать:

**1. Почта уйрăмĕнче.**

Почтамт пенсионер ăçта пурăннине кура графикпа пенси çитерессине йĕркелет. Укçана пурăннă тата прописКăра тăнă вырăнта илме пулать.

**2. Киле çитерсе пани.**

Енчен çак кун килте пулмасан ăна уйăхра почта уйрăмĕн кассинче илме пултаратăр.

**3. Банк урлă.**

Кунта сире укçана вклада е банк карттин счечĕ çине хума пулăшаççĕ.

**4.** Нотариус патĕнче çирĕплетнĕ **шантару хучĕпе** те тӳлеççĕ.

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# «Извеç ура»

**Тархасшăн, калăр-ха, "извеç ураллă" чăхсене мĕнле сиплемелле? Кĕçĕттерекен сăвăссене епле пĕтермелле?**

**Валентина ГОРШКОВА. Вăрнар районĕ.**

***Специалист сĕнĕвĕ:*** чăхчĕпе, уйрăмах ӳссе çитĕннĕ чăхха тĕрлĕ йышши сăвăс тапанать. Ытларах чухне вĕсем уран тĕксĕр вырăнĕсенче пулаççĕ, сайра-хутра тĕк çинче те. Сиенленнĕ вырăн кĕçĕтнĕрен чăх ăна тăтăшах сăхать, таккать. Çакна пула ӳт юнланса хытнă сийпе витĕнет, чĕрне çĕрме тытăнать. Чăх уксахлать, çăмарта тума пăрахать.

Кнемидокоптоз (ку чире çапла ят панă) çуркунне тата çулла палăрать.

Чăхха акарицидсенчен пĕринпе (0,01 процентлă эктомин, 0,2 процентлă алуган, 0,4 процентлă трихлорметафос е 4 процентлă К супăнь) усă курса сиплеççĕ. Унсăр пусне 0,0025 процентлĕ бутокс та юрăхлă. Урине, кĕлеткипе пуçне тытса кайăк-кĕшĕке майĕпен 1-2 минутлăха хатĕр шĕвеке яраççĕ. 7 кунран çак ĕçе тепĕр хут пурнăçлаççĕ. Ун хыççăн таса хуралтăна вырнаçтараççĕ, хальччен усранă витене акарицидсемпе пĕрĕхтерeççĕ.

Кнемидокоптоз чирĕнчен хӳтĕлес тесен 6 уйăхран аслăрах чăх ӳтне тăтăш тĕрĕслемелле. Йышăн 10 ытла процентĕ чирлине палăртсан ăна йăлт улăштарса çĕнетмелле.

***Уйрăм çын опычĕ:*** "Извеç урана" сиплемелли чи ансат мелпе паллаштарасшăн. Кăмăл пулсан ăна кашниех алла илме пултарать.

Чирлĕ чăх урине кăшт ăшăтнă тип çупа сĕрмелле. Ку ĕçе кас енне пурнăçламалла. 1-1,5 эрнерен юнланса хытнă сийсем хăйпăнса ӳкеççĕ.

Тепĕр меле те тĕрĕслесе пăхнă. 100-150 грамм тип çăва пĕр апат кашăкĕ солидол хушмалла, лайăх пăтратмалла, ăшăтмалла. Чирлĕ чăх урине (черетпе) ăшă шĕвекре темиçе кун тытмалла. Çакă пĕрремĕш мелрен те лайăхрах.

***Специалист шухăшĕ:*** Вулакан сĕнĕвĕ усăллă темелле. Чир сăвăсран пуçланнине шута илсен чăх урисене ăшăтнă çу ăшĕнче 1-2 эрне тытни сурана хăйпăнма пулăшать, сăвăс та сывлайми пулса вилет.

Анчах çак кăпшанкă усă ӳт çинче кăна мар, тĕкре те тĕл пулать, çавăнпа чирлĕ чăхха комплекслă сиплемелле.



# Эмел курăкĕпе сиплеççĕ

**Килти выльăха час-часах эмел курăкĕпе сиплеççĕ. Унран тĕрлĕ шĕвек хатĕрлеççĕ.**

Пĕрремĕшне, пылланчăк шыва, курăк тунипе, çулçипе, чечекĕпе усă курса тăваççĕ. Вĕсене вĕтетеççĕ, эмаль савăта яраççĕ, вĕри шыв хушаççĕ, хупăлчапа хупласа 2-4 сехет лартаççĕ. Ун хыççăн икĕ сийлĕ марля витĕр сăрăхтараççĕ, вĕретсе сивĕтнĕ шывпа кирлĕ чухлĕ хутăштараççĕ.

Вĕретнĕ шыв пылланчăклинчен çакăнпа уйрăлса тăрать: вĕтетнĕ курăка кĕленче е эмаль савăта яраççĕ, пӳлĕм температуриллĕ шывпа хутăштараççĕ, хупласçĕ те 100 градуслă температурăра 30 минут шыв мунчинче тытаççĕ. Ун хыççăн 10 минут сивĕтеççĕ, сăрăхтараççĕ, вĕретсе сивĕтнĕ шыв хушаççĕ.

Икĕ тĕрлĕ шĕвеке те холодильникра 2-4 кун упраççĕ. Усă куриччен силлесе пăтратмалла.

**Сар çип утин** пылланчăк шывĕпе пăрава сиплеççĕ (диспепси чирĕнчен). Ăна сĕт вырăнне (выльăх виçин кашни килограмĕ пуçне 10 мл шутласа) кунне 2-3 хут параççĕ.

**Çĕмĕрт, уртăш, çирĕк çырлисенчен** вĕретнĕ шыв витаминпа, эфир çăвĕпе, ытти япалапа пуян, вĕсем вар-хырăма лайăх ĕçлеттереççĕ.

1 литр шыв валли 100 г вĕтетнĕ типĕ çырла илеççĕ, 30 минут вĕретеççĕ. Унтан сивĕтеççĕ, марля витĕр сăрăхтараççĕ, 8 г тăвар тата сахăр хушаççĕ. Пăрава – 100-250, сысна çурине 20-30 мл кунне икĕ хут апат умĕн параççĕ.

**Пилеш çырлинчен** вĕретнĕ шывпа пăрава вархырăм чирĕнчен сиплеççĕ.

Çак çырлара каротин, С витамин, сахăр, органика кислоти, ытти усăллă япала нумай. Ăна хĕл сивви пуçланиччен авăн-юпа уйăхĕсенче пуçтараççĕ, 50 градус температурăра типĕтеççĕ. Шĕвек хатĕрлеме çăнăх пек авăртаççĕ, вĕретнĕ шыва яраççĕ (1 л шыва 100 г), 15 минут вĕретеççĕ. Сивĕтсен пăрава сĕт ĕçтериччен пĕр сехет маларах 100-200 мл параççĕ. Вĕретнĕ шыв тĕттĕм вырăнта 4 талăк упранма пултарать.

## ÇĔР ÇЫН – ÇĔР ШУХĂШ

# Ир-ирех шăвармалла

Хăяра ирхине е каçхине шăвармалла. 1 тăваткал метра 10 л шыв каять. Тымарне ăнсăртран сиенлесрен хăяра купаламастăп.

Чечеке ларсан (йăран çине куçарса лартнă хыççăн 2,5 – 3 эрнерен), унтан 1–1,5 эрнерен удобренипе апатлантармалла. Çитĕннĕ чухне тăпрана кăпкалатса çумкурăкран тасатмалла. Çакна тымарне сиенлесрен е тăпăлтарса кăларасран асăрханса тумалла.

Хăяр йӳçек тăпрана килĕштермест. Минерал удобренийĕпе усă курсан тăпра йӳçĕхет. Çавăнпа уйăхра пĕр хут сӳнтернĕ извеç шĕвекĕпе шăвармалла (1 витре шыва 0,5 стакан извеç). Кĕл те пулăшать (1 витре шыва 0,5 стакан кĕл).

Пысăк тухăç илме çăкăр кăвасĕпе усă курмалла. Вăл чи лайăх удобрени шутланать. Ăна хатĕрлеме йывăр мар: витрен 2-3 пайне çăкăр хытти тултармалла. Шыв ярса йывăр япалапа пусăрăнтармалла, ăшă вырăна лартмалла. Эрне йӳçĕхтернĕ хыççăн шĕвеке шывпа хутăштармалла (1:3), пĕр тĕмме 0,5 л каять.

**Людмила КОНДРАТЬЕВА.**

# Колорадо нăрринчен – сухан хуппи

Кăçал çанталăк типĕ, ăшă тăнăран колорадо нăрри ĕрчесех кайрĕ. Унран хими хутăшĕсĕрех хăпма май пур. Мĕнле? Çĕрулми тĕммисем хушшине пĕтнĕк акатăп. Колорадо нăрри унăн шăршине килĕштермест. Кун пек чухне пĕтнĕкпе сухан хуппин шĕвекĕпе усă куратăп (10 л шыва витрен 1-3 пайĕ чухлĕ сухан хуппи, вĕтетнĕ 10 пĕтнĕк туни). Шывпа хутăштарса хĕвел çинче 6 кун лартмалла. Унтан сăрхăнтарса татах 20 л шыв хушмалла. Çак шĕвекпе çĕрулмине сирпĕтмелле. Ана çинче пĕрремĕш нăрă асăрхасанах ĕçе тытăнмалла.

**Антонина МЕДВЕДЕВА.**

## КИРЛĔ ПУЛĔ

# Укроп пыйтлансан

Ешĕл çимĕç йĕркеллĕ çитĕнтĕр тесен пусă çаврăнăшне пăхăнмалла. Ăна маларах кишĕр, сельдерей, петрушка çитĕнтернĕ йăран çине акмалла мар. Укропа курăк пыйтинчен, ытти сăтăрçăран сыхлама ыхра, сухан йăранĕсемпе черетлемелле. Техĕмлĕ курăксем – кориандр, базилик, пĕтнĕк, фенхель – сиенлĕ хурт-кăпшанкăран упраççĕ. Йăранпа юнашар лаватер, кăтра кушак пăрçи (мальва), салтак тӳми, çавăн пекех пăрçа йышши культурăсем пулни те сăтăрçăсене хăратать.

Укропа паланпа, çĕмĕртпе юнашар акма юрамасть. Ку йывăççене сиенлĕ хурт-кăпшанкă уйрăмах тапăнать. Вăл юнашар йăрансене те çăмăллăнах куçать.

Курăк пыйти тапăнсан ешĕл çимĕçе шывпа вайлă сирпĕтсе çумалла.

Хурт-кăпшанкăна кăткăсем те сарма пулăшаççĕ. Çавăнпа садра кăткăсем асăрхасан вĕсене пĕтермелле. Сăтăрçăсене хирĕç кĕрешмелли препаратсем самай. Анчах ешĕл çимĕçпе куллен усă курнă май химихутăшĕ организма та лекме пултарать. Биопрепаратсем вара çыншăн сиенлĕ мар. Вĕсем курăк пыйтирен, ытти сăтăрçăран хăпма пулăшаççĕ. **«Фитовермпа»** сирпĕтнĕ хыççăн 2-3 кунран пĕтеççĕ.



Типĕ çанталăкра ку препарат ешĕл çимĕçе сăтăрçăран 3 эрне хушши упрать. **«Энтеробактерин», «биотлин»** та аван пулăшаççĕ. Суперфосфатпа тата кали хлорĕпе (2:1 виçепе) апатлантарни ӳсен-тăрана çирĕплетет. 10 л шывра 30 г удобрени хутăшне ирĕлтермелле те укропа сирпĕтмелле, уйрăмах çулçăн аялти пайне. Эрнерен каллех çакна тумалла.

**Халăх мелĕ.** Курăк пыйти супăнь шĕвекĕпе сирпĕтсен те пĕтет. 10 л шывра 100 г шĕвек супăнь е чашăк-тирĕк çумалли хатĕр хутăштармалла. Енчен алă айĕнче вĕсем пулмасан 300 г кĕпе супăнĕ теркăласа ямалла. Вĕри шĕвеке 150-250 г йывăç кĕлĕ хушма юрать. Усă курнă чухне укропа ăшă шывра чӳхемелле кăна.

**Курăк пыйтирен хăпма çак хутăшсем пулăшаççĕ:** томатпа çĕрулми авринчен; вĕтетнĕ пуçлă суханран е хуппинчен; ыхраран; салтак тӳминчен; шĕпĕн курăкĕнчен; хутаслă пăрçăран хатĕрленĕ шĕвексем.

СЫВЛӐХ

# Ҫӗлен чӗлхи вӑрӑм

**Ҫулла ҫынсем ҫут ҫанталӑкра уҫӑлса ҫӳреме, вӑрманта кӑмпа-ҫырла пухма кӑмӑлласҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах ҫӗленрен асӑрханмалли пирки те манмалла мар.**

Ҫу уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа паянхи кунччен Чӑваш Енри медицина учрежденийӗсене ҫӗлен сӑхса шар курнӑ 14 ҫынна илсе пынӑ. Юлашки тӗслӗх ҫӗртме уйӑхӗн 26-мӗшӗнче пулнӑ. Етӗрне районӗнче пурӑнакан хӗрарӑма вӑрманта ҫырла пухнӑ вӑхӑтра ҫӗлен сӑхнӑ. Халӗ унӑн больницӑра сипленме тивет. ЧР Сывлӑх сыхлавӗн министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх – ытларах Сӗнтӗрвӑрри, Етӗрне тата Шупашкар районӗсенче пурӑнакансем ҫӗлен-калтаран шар курасҫӗ.

Вӑрмана кайнӑ чух атӑ тӑхӑнма ан манӑр. Ҫырла-кӑмпа шыранӑ май патакпа усӑ курӑр. Сасӑ илтсенех ҫӗлен урӑх ҫӗрелле шуса иртӗ. Хӑйне хӑратмасан вӑл ҫынна тапӑнмастех. Ҫӗленкалта ҫӗрнӗ тунката таврашне, чӑтлӑх вырӑнсене кӑмӑллать. Ҫавӑнпа та ҫак вырӑнсенче асӑрханулӑ пулӑр.

**МӖН ТУМАЛЛА?**

✓ Инкеке лекнӗ ҫынна меллӗрех вырӑна вырттармалла.

✓ Сӑхнӑ ал-урана ҫӳлерех ҫӗклемелле, алла хуҫлатмалла.

✓ Ӳт тӑртаниччен алӑри ҫӗрре, сулла, атӑ-пушмака хывмалла.

✓ Наркӑмӑша ӗмсе илмелле (ҫӑварта суран пулмасан), сурса кӑлармалла е суранран юна пусса сӑрхӑнтармалла. Ун хыҫҫӑн ӑна йодпа, антисептик шӗвекӗпе сӗрмелле.

✓ Сурана таса япалапа ҫыхмалла, ӳт тӑртансан ҫыхха пушатмалла.

✓ Суран тӗлне сивӗ тытма юрать.

✓ Инкеке лекнӗ ҫынна шыв чылай ӗҫтермелле.



✓ Аллергирен, ыратнине ирттерекен препаратсем пама юрать.

✓ Вӑхӑта сая ямасӑр ҫывӑх больницӑна илсе ҫитермелле.

**ЮРАМАСТЬ**

● Ҫӗлен сӑхнӑ ал-ура ҫине жгут хума юрамасть. Вӑл наркӑмӑша организмра сарӑлма чараймасть, чире вӗрӗлентерет ҫеҫ.

● Сӑхнӑ вырӑна ҫунтарма, касма кирлӗ мар.

● Сӑра-эрех ӗҫни те сиенлӗ.

## Куҫа урпа тухсан

**1** Хура чей хутаҫне ӑшӑ шыва ямалла, кӑлармалла, куҫ ҫине хумалла.

**2** Алоэ ҫулҫин сӗткенне кӑлармалла, ӑшӑ шывпа хутӑштармалла, куҫ хупанки ҫине компресс хумалла.

**3** Салтак тӳмипе ҫурла курӑкӗн (календула) шӗвекӗсене хутӑштармалла, шыҫнӑ вырӑна хумалла.

Урпа – инфекци чирӗ. Ӑна антибиотиксемпе сиплеҫҫӗ. Пӳрленсе шыҫнӑ вырӑна хӗртме юрать-ши? Юрать, анчах виҫине пӗлмелле. Ҫак процедурӑна урпа тулса ҫитсен пурнӑҫламалла. Паллах, чи паха мел – УВЧпа хӗртни. Ҫавӑн пекех ун ҫине чӑмӑрла пӗҫернӗ ҫӑмарта е ӑшӑтнӑ тӑвар (пир татӑкӗпе чӗркемелле) хума юрать.

## Юн тымарӗ тӗвӗленсе сарӑлнӑран



Темиҫе ҫул каярах манӑн ура ыратма пуҫларӗ. Каҫ енне пушшех те. Пӗлӗш сӗннипе тухтӑр патне кайрӑм. Вӑл юн тымарӗсем тӗвӗленсе сарӑлма пуҫланине (варикоз) пӗлтерчӗ. Паллах, эмелсемпе сипленме хушрӗ. Унсӑр пуҫне эпӗ халӑх медицинипе те кӑсӑклантӑм. Ҫак чирпе аптракансене икӗ рецепт сӗнесшӗн.

Купӑста пуҫӗнчи ҫиелти ҫулҫӑсене хӑйпӑтса пӑрахмалла. Иккӗмӗш ретрисене шывпа сирпӗтмелле, холодильникра пӗр талӑк тытмалла, каҫхине ҫывӑрас умӗн ыратакан вырӑна хумалла, бинтпа е марльӑпа ҫыхмалла. Ку процедурӑна кашни кун тумалла. Сиплев курсӗ – пӗр уйӑх.

Ытлашши писнӗ помидора вӗтетмелле, ура ҫине компресс хумалла. Ҫуллахи вӑхӑтра вӗлтӗренрен хатӗрленӗ яшка ҫиме тӑрӑшмалла.

**Галина САМСОНОВА. Шупашкар районӗ.**

*Асӑрхаттарни: халӑх сӗнекен сывату меслечӗсемпе усӑ куриччен тухтӑрпа канашласа пӑхмалла.*

ТӖПЕЛ

# Хӗллене – тутлӑ ҫимӗҫ

**БОРЩ ВАЛЛИ ЮРМА**

*Кирлӗ пулать: 2,2 кг кӑшкар ути, 2,2 кг симӗс сухан, 1,2 кг симӗс укроп, 80 г тӑвар.*

Кӑшкар утине лайӑх ҫумалла, кӑштах типӗтсе вӗттӗн турамалла. Симӗс сухана тасатмалла, 2 см вӑрӑмӑш касмалла. Хатӗр ешӗл ҫимӗҫе эмаль савӑта ярса тӑварпа хутӑштармалла. Сӗткенӗ тухсан стерилизациленӗ 0,5 л банкӑна тултармалла. Ҫиелтен хупӑлчисене хурса 20-25 минут стерилизацилемелле. Хупмалла, кутӑн ҫавӑрса хумалла. .

**ПОМИДОРПА БАКЛАЖАН**

*Кирлӗ пулать: 1 кг помидор, 1 кг баклажан, 150 г петрушка, 100 г укроп, 100 г ыхра, пӗрчӗллӗ хура пӑрӑҫ (10 пӗрчӗ), 10 г техӗмлӗ пӑрӑҫ, 3 лавр ҫулҫи.*

*Маринад: 1 л шыва – 40 г тӑвар, 40 г сахӑр, 20 мл 70 процентлӑ уксус.*

Баклажана хуппинчен тасатмалла. Тӑвар сапса 3-4 сехет лартмалла. Симӗс укропа, петрушкӑна вӗттӗн турамалла. Баклажана сивӗ шывра ҫумалла, ӑшне ешӗл ҫимӗҫ тултармалла.

3 л банка тӗпне 3 лавр ҫулҫи, хура тата техӗмлӗ пӑрӑҫ, темиҫе шӑл ыхра хумалла. Помидора банкӑна ҫурри таран тултармалла, унтан – баклажан.

Маринад: сивӗ шыва сахӑр, тӑвар, уксус ярса вӗреме кӗртмелле. Вӗрискерне банкӑна тултармалла. Хупӑлчине хупса 30-35 минут стерилизацилемелле. Унтан хулӑн япалапа хупласа сивӗниччен тытмалла.

## Илемлӗ ҫӳҫ



Шӑрӑх кунсенче пуҫа хупласа ҫӳремесен ҫӳҫ илемлӗхне ҫухатать, вӑл тӗксӗмленет, тӑкӑнать. Илеме мӗнле таврӑмалла?

Ӳсен-тӑран ҫӑвне шыв «мунчинче» 40 градус таран вӗрилентермелле, ҫур лимон сӗткенӗ хушмалла. Хутӑша ҫӳҫе сӗрмелле, полиэтилен пакетпа хупламалла. Ҫиелтен хулӑн алшӑллипе чӗркемелле. 1,5 сехетрен ҫӳҫе ӑшӑ шывпа ҫумалла.

АСАННЕ АРЧИНЧЕН

### Рис

Гарнир валли кӑпӑркка, техӗмлӗ рис пӗҫерме грейпфрут сӗткенне хушмалла (1 стакан риса ҫур грейпфрут сӗткенӗ, хӗрли пулсан лайӑхрах).

### Сӗт

Сӗте сахӑр ярса вӗретсен (1л сӗте 1 чей кашӑкӗ) вӑрах вӑхӑт йӳҫӗхмест.

### Маринадланӑ сухан

Сухана ҫаврашкан касмалла. Сахӑр, тӑвар, пӑрӑҫ сапмалла, ӳсен-тӑран ҫӑвӗ ярса хутӑштармалла. 15 минутран аш-какайпа, макаронпа ҫимелли хушма апат хатӗр те.

### Супӑнь




Супӑнь кӑпӑкӗпе алла йӗпетмелле, типӗтмелле. Ун хыҫҫӑн тӑпрапа ӗҫлесен те алӑ ытлашши вараланмӗ. Ӗҫе тытӑниччен супӑнь касӑкне чӗрнепе чӗрмелесе илсен те пӑсмасть. Капла тусан чӗрне хушшине пылчӑк тулмасть.

Вӑчӑрана супӑньпе сӑтӑрсан ҫӑмӑллӑнах шӑвать.

ПӖЛМЕ КӐСӐК

# Тӗлӗнтермӗш ӳт-пӳ

● **Пуҫ мимине ӗҫлеттерме 10 ватлӑ лампочка чухлӗ паракан энерги кирлӗ.** Ахальтен мар мультфильмсенче ҫын пуҫне ӑслӑ шухӑш кӗрсен ҫӳлте лампочка ҫуталса кайнине курма пулать. Ҫакӑ чӑнлӑхран инҫе тӑмасть. Ҫывӑрнӑ чухне те пуҫ мими пӗчӗк лампочка чухлӗ энерги ӗҫлесе кӑларать.

Тӗлӗнмелле, кӑнтӑрла мар, шӑпах ҫӗрле унӑн хастарлӑхӗ ӳсет. Каҫхине вӑл кӑнтӑрлахи ӗҫ вӑхӑчӗпе танлаштарсан канмалла пек. Ӑсчахсем унӑн тепӗр енне те тупса палӑртнӑ – ҫын ҫывӑрсан унӑн пуҫ мими "вӑранать-мӗн". Ӑслӑлӑх тӗлӗшӗнчен ҫакна ӑнлантарни ҫук, анчах ҫак органа "ӗҫченлӗхшӗн" тав тумалла, ара, ҫывӑрнӑ чух тӗлӗк тӗлленниех мӗне тӑрать.

● **Ҫын организмӗнчен шалти органсен ытларах пайне кӑларсан мӗн пулать?** Вӑл пурӑнаймасть тетӗр пулӗ-ха. Йӑнӑшатӑр. Этем кӗлетки пӑхсан кӑна черчен пек туйӑнать. Сулла, хырӑмлӑха, пӗр пӳрене, пӗверӗн 75 процентне, пӗр ӳпкене, пыршӑлӑхӑн 80 процентне тата хырӑм айӗнчи, купарча таврашӗнчи кашни органа кӑларсан та ҫын пурӑнать.

# Питрав типпи

Халӗ Питрав типпи пырать. Вӑл утӑ уйӑхӗн 11-мӗшӗнче вӗҫленет. Ҫак кунсенче мӗн ҫиме юрать-ши? Ку ыйту нумайӑшне кӑсӑклантарать. Асӑннӑ типӗ Аслӑ типӗ пек ҫирӗп мар. Ашран тата сӗтрен хатӗрленӗ апат кӑна ҫиме юрамасть. Пулла вара – юнкунпа эрнекун. Ытти кун апатланма ирӗк пур. Унсӑр пуҫне шӑматкун, вырсарникун тата чиркӳ уявӗсенче ҫырла эрехӗ ӗҫме те юрать.

Утӑ уйӑхӗнче (типӗрен тухсан) ҫемье ҫавӑракан мӑшӑрсем пирки вӑрӑм ӗмӗрлӗ те телейлӗ пурнӑҫпа пурӑнӗҫ тенӗ. Савӑнӑҫпа пӗрле кулянмалли те пулӗ. Ҫемьере яланах ҫапла пулса пырать те. Ӗлӗкхи йӑлайӗркепе тата халӑх сӑнанӑ тӑрӑх – утӑ уйӑхӗн 31-мӗшӗнче туй тӑвакансем мӗн ватӑличченех пӗр-пӗрне чунтан юратса пурӑнаҫҫӗ.

❖ Туй вӑхӑтӗнче хӗр кӗпи арки ҫине булавка тирсе хунӑ, ан пӑсчӑр тесе.

❖ Туйра хирӗҫӳ-харкашу пулсан хӗрпе каччӑн телейӗ пулмасть.

❖ Туй вӑхӑтӗнче ҫанталӑк тӳлек пулсан ҫамрӑксем лайӑх пурӑнӗҫ.

УЙӐХ КАЛЕНДАРӖ

| Число, кун | | Утӑ, 7 – кӗҫнерникун | Утӑ, 8 – эрнекун | Утӑ, 9 – шӑматкун | Утӑ, 10 – вырсарникун | Утӑ, 11 – тунтикун | Утӑ, 12 – ытларикун | Утӑ, 13 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХӖВЕЛ | тухать | 3.15 | 3.16 | 3.17 | 3.19 | 3.20 | 3.21 | 3.23 |
| | анать | 20.36 | 20.35 | 20.34 | 20.33 | 20.32 | 20.31 | 20.29 |
| Кун тӑршшӗ | | 17.21 | 17.19 | 17.17 | 17.14 | 17.12 | 17.10 | 17.06 |
| УЙӐХ | тӑхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунӗ | 4-мӗш кун | 5-мӗш кун | 6-мӗш кун | 7-мӗш кун | 8-мӗш кун | 9-мӗш кун | 10-мӗш кун |
| | | Арӑслан паллинче | Хӗр паллинче | Хӗр паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Тараса паллинче | Скорпион паллинче |

# Утă, 8: Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ

## Туслăха шур юр хуплаймĕ

***Патăрьелĕнчи Александр Ильичпа Зинаида Викторовна Махмутовсем 60 çул ытла пĕрле килĕштерсе пурăнаççĕ. Туслă мăшăр 5 хĕр çуратса ÿстернĕ, пурне те аслă пĕлÿ илме пулăшнă, туй туса мăшăрлантарнă. Паян сакăр мăнукĕпе тата пилĕк кĕçĕн мăнукĕпе хĕпĕртеççĕ вĕсем. Çак телейрен пысăкрах савăнăç пур-ши тĕнчере?***



Автор сăнÿкерчĕкĕ

### Раштав сивви пек

1955 çулта мăшăрланнă вĕсем. Александр Ильич Патăрьелĕнче çуралса ÿснĕ, Зинаида Викторовна вара – Çĕнĕ Ахпÿртре. Кÿршĕ ялсенче пурăннă пулсан та шăпа вĕсене Мускав облаçĕнчи Солнечногорск хулинче туслаштарнă. Иккĕшĕ те унта вербовкăпа торф кăларма кайнă. Маттур каччăпа илемлĕ сăнпитлĕ хĕр пĕр-пĕрне пĕрре курсах килĕштернĕ. «Эпир хальхи çамрăксем пек юрататăп тесе калама та вăтаннă», – аса илет иртнине кил хуçи. Çамрăксем раштавра пĕр çемьене пĕрлешнĕ. Çавăнпах вĕсен туслăхĕ те раштав сивви пек çирĕп пулнă-тăр.

Иккĕшĕ те чылай терт-нуша курнăран пурнăç тути-масине аван ăнланнă. Юратăва, туслăха туптама вăл та пулăшнă.

Мускав облаçĕнчен таврăнсан Александр Ильич Канашри механизаци училищине вĕренме кайнă. Ун хыççăн Патăрьелĕнчи МТС-ра ĕçленĕ. «Мана тракторттан кăкаракан С-6 комбайн çирĕплетсе пачĕç, – терĕ вăл иртнине куç умне кăларса. – Ун чухне механизаторсем çитместчĕç. Çавна май «Красное знамя» колхоза ячĕç».

Машинăпа трактор станцийĕнчи техникăна хуçалăхсене хайсене салатса панă хыççăн ăна урăх ĕç сĕннĕ. Урăхла каласан, МТС саланнă хыççăн районта «Сельхозтехника» пĕрлешÿ йĕркеленнĕ. Вăл вăхăтра вылăх-чĕрлĕх фермисене механизацилесси вăй илнĕ. Витесене шыв кĕртесси, ĕнесене аппаратпа сумалла, тислĕке транспортерпа кăлармалла тăвасси ятарлă бригада çинче пулнă. Ăна ертсе пыма Александр Ильича шаннă. Каярахпа унăн бригадине «Чувашсельхозмонтаж» трестăн 5-мĕш механизаци колоннине куçарнă. Вĕсем районти тĕрлĕ колхозри фермăсенче ĕçленĕ. Ача садĕнчи, шкулти хутса ăшăтмалли тытăма хута ярассине те хайсем çине илнĕ. Шанса панă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа пурнăçланăран Александр Махмутова хăй вăхăтĕнче «Хисеп Палли» орденпа чысланă. Çавăн пекех вăл «Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ строителĕ» ята та тивĕçнĕ. «Ӳркенмен эпĕ, хăть мĕнле ĕçе те кăмăлланă. Мăшăрланнă хыççăн вицĕ çултан уйрăлса тухрăмăр. Малтан йывăç çурт лартрăмăр, кайран – кирпĕч. Çемье пысăкланнă май ун çумне хушма çурт тĕксе хутăмăр», – малалла тăсăлать калаçу. Чăн та, çурчĕ аслă вĕсен, пÿлĕм çине пÿлĕм. Ачапăча йышлă çитĕнни çакăнтанах палăрать.

Килти ĕç-пуç ытларах мăшăрĕ çине тиенĕ. Хĕрĕсене те ачаранах ĕçпе пиçĕхтернĕ вĕсем. Зинаида Викторовна «Батыревский» совхозра тăрăшнă. Хушма хуçалăхра та чылай вылăх тытнине пĕлтерчĕ хĕрарăм. «Хур-кăвакал та нумай усранă. Ачасене тăрантарас, тумлантарас тесе тăрăшаттăмăр. Вылăх сутса укçа тăваттăмăр. Мĕнле чăтнă-ши?» – терĕ вăл.

Ăна та «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» тата Ача амăшĕн медалĕсемпе чысланă. Махмутовсем иккĕшĕ те – ĕç ветеранĕсем.

### «Эпĕ – телейлĕ хĕрарăм»

Пурнăç юханшыв пекех аслă. Унта ăшăх вырăн та, авăр та, шыв айĕнчи чулсем те пур. Пĕр-пĕрне ăнлансан, пулăшсан, юратсан çеç унтан ишсе тухма май пур. Махмутовсене шăпах çак ушкăна кĕртес килет манăн. Туслă мăшăр паян та пĕр-пĕрне савать. «Эпĕ чăтма çук телейлĕ хĕрарăм, – кăмăллăн калаçрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ. – Санькка мана сăра-эрех ĕçсе тарăхтарман, пÿрнепе тĕкĕнме мар, сивĕ сăмах та каламан. Ачасемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлетчĕ. Вĕсемпе шăкăлшăкăл калаçса ĕçлени халĕ те куç умĕнче. Ахальтен мар хĕрсем ашшĕне ытларах килĕштереççĕ пек туйăнать».

Махмутовсен ачисем тăван йăваран вĕçсе тухса саланнă. Надя хăйĕн çемйипе Ржевра пурăнать, Вальăпа Таня – Шупашкарта. Любăпа Вера ашшĕ-амăшĕнчен аякра мар, Патăрьелĕнчех тĕпленнĕ. Кашни кунах çÿреççĕ вĕсем патне. Пысăкрах ĕçсем тумалла чухне пурте пухăнаççĕ. Акă аслисем пусă чавма шухăшланă, ачисем вара кар тăрса ĕçе тытăннă. Çĕрулми лартнă-кăларнă е ытти ĕçе пурнăçланă чухне те пĕрле тăрăшаççĕ. Хĕрĕсем пĕр-пĕринпе çав тери туслă ÿсĕннине палăртрĕç ашшĕпе амăшĕ. Çав туслăх паян та сыхланса юлнă вĕсен хушшинче. «Пире пăхнăшăн ачасене тав тăватпăр. Кĕрÿсем те маттур, мăнуксемпе вара чунран савăнатпăр», – хĕпĕртерĕ аслă ăру.

Тăхăр теçеткене çывхаракан ватăсен сывлăхĕ хавшанă пулсан та юрату сÿнмен, çулсем иртнĕçемĕн вăл çирĕпленнĕ çеç. Пĕр-пĕрне куçран пăхса ăнланаççĕ вĕсем. Ахальтен мар ĕнтĕ Махмутовсене Республика Пуçлăхĕн хушăвĕпе килĕшÿллĕн 2012 çулта «Юратупа шанчăклăхшăн» орден парса хавхалантарнă. Çак чыса тивĕçлĕ вĕсем. Тăван çĕршыва юрăхлă ачасем çуратса ÿстернĕ, иккĕшĕ те ĕç паттăрĕсем пулнă, çемьери юратăва упранă. Телей тилхепине пĕччен мар, ĕмĕрĕпех иккĕн тытса пынă, йывăрлăха парăнман. Çавăнпа пурнăç сукмакне паянхи кунччен пĕрле такăрлатаççĕ те.

**Патăрьел районĕ.**

***Çемйĕре лайăх пăхса усрăр: çемье вăл – халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан та хытă тытса тăнă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьен лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хÿтĕлесе тăрать. Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар. Ӳтĕре ясарпа ан варалăр, ÿсĕртекен, астаракан япаларан шикленĕр. Çемйĕре сыхă усрасан, ачăрсене чипер упраса пурăнсан, килĕштерсе лăпкă ĕçлесе пурăнма хăвăр валли тĕреклĕ чарак лартса хурăр.***

**Иван Яковлев Чăваш халăхне панă халалран.**

КĔСКЕН

## Тăлăх – хăрăк турат мар

**Паян республикăра ача-пăчана çемьене йышăннисен тăваттăмĕш форумĕ усăлать.** Вăл икĕ куна тăсăлать. Унта 2 пин ытла çын хутшăнать. Форум вăхăтĕнче дискусси площадкисем, тренингсемпе ăсталăх класĕсем, консультаци пункчĕсем, пултарулăх куравĕсем ĕçлеççĕ. Опекунсен, попечительсемпе ачана усрава илнĕ ашшĕ-амăшĕн, опекăпа попечитель органĕсен специалисчĕсен, ача çурчĕсемпе интернат шкулсен ертÿçисен, общество организацийĕсен представителĕсен пĕр-пĕринпе курнăçса калаçмалли пурах.

Çакнашкал çемьесене çирĕплетме Чăваш Енре çулсеренех тĕрлĕ мероприяти ирттереççĕ. Сăмахран, «Чăваш Ен – тăлăхсăр» автокараван, «Çемье ăшши» курав, ача усрава илекен ашшĕ-амăшĕн шкулĕ, ассоциацийĕ ĕçлет. Тăлăх, ашшĕ-амăшĕн хÿттисĕр юлнă ачасене çемьене йышăнакансене уйăхсерен укса парса хавхалантараççĕ, усрава илекенсем вара пĕр хутчен пособие тивĕçеççĕ.

## Çветтуйсене халалласа

**Петрпа Феврони Муромскисене халалласа ыран Шупашкарта палăк усаççĕ.** Ăна Дон çинчи Ростовра хатĕрленĕ. Композици çÿллĕшĕ – 4,6 метр, никĕсĕпе пĕрле – 5,6 метр. Палăк йывăрăшĕ вара – 3 тонна яхăн.

Скульптура Петрпа Феврони кĕлеткисенчен тăрать, вĕсен ал тупанĕсем çинче – кăвакарчăнсем. Çакă çирĕп çемьепе тăнăçлăха палăртать. Çветтуйсем çийĕн – хĕрес тытнă пирĕшти.

Палăка арçынсен Виç-ипостаçлĕ Çветтуй Турă мăнастирне хирĕç вырнаçтарĕç. Унăн скульпторĕ – Раççей тава тивĕçлĕ художникĕ Сергей Исаков. Сăмах май, вăл – Мускав тата Пĕтĕм Руç Патриархĕ Кирилл пил панă пĕртен пĕр ÿнерçĕ.

Петрпа Феврони палăкĕсем ытти хулара та пур.

## Амăшĕн капиталĕнчен 25 пин

**Амăшĕн капиталĕн сертификатне тивĕçнĕ, çавăн пекех иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачасене кăçалхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕччен кун çути кăтартнă (усрава илнĕ) çемьесем амăшĕн капиталĕн шутĕнчен пĕр хут тÿлев, 25 пин тенкĕ, илме пултараççĕ.**

Ăна тивĕçме Пенси фондне е нумай тĕллевлĕ центра (МФЦ) кăçалхи чÿк уйăхĕн 30-мĕшĕччен заявлени çырса памалла. Унпа пĕрлех сертификат хуçин паспорчĕ тата банкра уçнă счет хучĕ пулмалла.

Заявлени панă хыççăн икĕ уйăх хушшинче укçана банкри счет çине куçарĕç. Ăна кулленхи ыйтусене татса памашкăн тăкаклама юрать.

**Кăларăма Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

**Кăçал Раççей Президенчĕн Указĕпе ачасене пăхса çитĕнтерес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата çемье йăлисене çирĕплетнĕшĕн пирĕн республикăри 6 çемьене «Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ» орденпа чысланă.**

**«Юратупа шанчăклăхшăн» ордена Чăваш Енре кун кунлакан, çемье çавăрнăранпа 50 е ытларах çул пĕрле пурăнакан мăшăрсене параççĕ. Çак çемьере юратупа шанчăклăх хуçаланмалла, ăнлану пулмалла, çĕршыва усă кÿрекен ачасем пăхса çитĕнтермелле, сывă пурнăç йĕркине тытмалла. Ку орденпа çемьесене пĕрремĕш хут 2009 çулта чысланă.**

**«Ача амăшĕ героиня» ордена СССР Президиумĕн указĕпе килĕшÿллĕн 1944 çулхи утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче пуçарнă. Ăна вунă е ытларах ача çуратнă хĕрарăмсем тивĕçнĕ. Ордена 1991 çулта юлашки хут панă. Пĕтĕмĕшле 500 пине яхăн çын илме пултарнă.**

**Чăваш Енре юлашки 5 çулта нумай ачаллă çемьесен шучĕ 35 процент чухлĕ пысăкланнă.**

**Пĕлтĕр пирĕн республика Раççей Федерацийĕнче ачасене çемьесене вырнаçтарас енĕпе малтисен йышне тата ачасемшĕн пурăнма лайăх майсем туса панă чи ăнăçлă регионсен пĕрремĕш теçеткине кĕнĕ.**

### ХЫПАР-ХĂНАР

# Ял ĕçченне пулăшма

**Яллă территорисене çирĕп аталантарас тĕлĕшпе йĕркеленĕ тĕллевлĕ патшалăх программипе республикăри ял çыннисен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма кăçал 108,67 млн тенкĕ уйăрнă.** 2016 çул валли çирĕплетнĕ списокпа 162 çемье, çав шутра 109 çамрăк çемьепе специалист, ялта çурт тума (туянма) социаллă тӳлеве тивĕçĕ.

Бюджетран уйăракан укçан 70 процентĕ (унтан сахал пулмалла мар) ялта ĕçлесе пурăнакан çамрăк çемьесемпе специалистсене лекмелле.

Тишкерӳ тăрăх – социаллă тӳлеве илекенсен 64 процентĕ ял хуçалăх тытăмĕнче вăй хурать, социаллă сферăра тăрăшакансем – 35, ытти тытăмрисем 1 процент. Агропромышленноç комплексĕнчи çамрăк специалистсемпе çамрăк çемьесен кăтартăвĕ – 61 процент.

Программа вăя кĕнĕренпе, 2003-2016 çулсенче, тавăрса памалла мар патшалăх пулăшăвне пĕтĕмпе 4824 çемье тивĕçнĕ, ку шутра – 1819 çамрăк çемьепе специалист.

# 101 çулта

**Çак кунсенче Йĕпреç районĕнчи Хыркасси поселокĕнче пурăнакан ĕç ветеранĕ, тыл ĕçченĕ Ефросиния Андриановна Филиппова 101 çул тултарнă.** Вăрăм ĕмĕрлĕ хĕрарăмăн пурнăçĕ çăмăл пулман. 1936 çулта мăшăрланнăскер Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи йывăрлăха чăтăмлăн тӳссе ирттернĕ, пуçа усман. Григорий Филипповичпа сакăр ача çуратса ӳстернĕ, анлă пурнăç çулĕ çине кăларнă, I тата II степень "Ача амăшĕн мухтавĕ" ордена тивĕçнĕ.

# Çырмара – мамонт шăлĕ

**Тăвай районĕнчи Çĕнĕ Ишпуç ялĕнче пурăнакан Иван Петров çырмара мамонтăн икĕ шăлне тупнă.** Вĕсем 5-шер кг таяççĕ. Иван Владимирович шăлсене Тăвайри палеонтологи музейне панă. Çапла вара музей сумлă экспонатпа пуянланнă. Сăмах май, асăннă музейра çак чĕрчунăн пĕçĕ шăмми тата темиçе шăл унччен те пулнă. Мамонт Тăвай тăрăхĕнче вунă пин çул каялла пурăннă.


Реклама

# Ака-суха çăмăллатнă кредитпа

Раççей ял хуçалăх банкĕ 2016 çулхи çур çулта Чăваш Енри аграрисене сезонри ĕç-хĕле ирттерме 320 млн тенкĕлĕх 100 кредит панă.

Укçа-тенке вăрлăх, ӳсентăрана хӳтĕлемелли хатĕрсем, минерал удобренийĕ, ГСМ, выльăх-чĕрлĕх туянма тата ытти тĕллевпе усă курнă.

Банк кредита АПК предприятийĕнчи ĕç-хĕле шута илсе парать, процент ставки те пысăк мар. Финанс учрежденийĕнчен салука хывмасăрах кивçене кĕме, тĕп парăма тассине каярах хăварма пулать. Кредита тĕрлĕ енпе тивĕçтернипе, çав шутра пулас тухăçа салука хывса та илме май пур. Сезонри ĕçе кредитланă çĕрте Раççей ял хуçалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕн тӳпи 80 процентпа танлашать.

*Раççей Тĕп банкĕн 3349-мĕш номерлĕ генеральнăй лицензийĕ.*


### САЛАМЛАТПĂР!



Юратнă аннене, хунямана, асаннене, аппана Етĕрне районĕнчи Урапакасси ялĕнче пурăнакан **Ольга Александровна МЕДВЕДЕВĂНА** 94 çул тултарнă ятпа чунчĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Хĕрĕсем, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, йăмăкĕсемпе вĕсен ачисем, тăванĕсем.**





## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. **Песок,** ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3. АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Д-ка манипул-м. Работаем без выходных. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**6. Косилки, грабли, ШПАГАТ,** пресс-подборщики, ворошилку для мотоблоков. **ДОСТАВКА!** Т. 8-927-851-68-58.

**7. Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, торф, кирп. бой, чернозем, навоз. Дешево. **Доставка.** Т.: 89033581770, 89276689713.

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9. ГРАВМАССУ, песок,** щебень, **керамзит,** кирп. бой, чернозем. **Дешево.** Доставка. Т. 89033583021.

**11. Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**13. Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича. Д-ка. Т. 89033225766.

**14. Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**16. Гравмассу, песок, щебень, керамзит** – недорого. Т. 89053465671.

**17. ОПГС, песок,** бой кирпича, **керамзит, навоз.** Т. 89051974019.

**21. Керамблок, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 89176757528.

**23. Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича, **керамзит.** Доставка. Т. 8-906-135-52-41.

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники,** опрыскиватели, **погрузчики,** БДФ. Низкие цены. Д-ка. Т. 89278533596.

**27. КИРПИЧ** рядовой, облицовочный, **блоки керамзитобетонные.** Доставка. Т. 8-903-322-02-08.

**29. Электропастухи, доильные аппараты.** Т. 8-937-375-80-95.

**33. Опрыскиватели, плуги,** фрезы, **окучники, сажалки,** картофелекопалки. ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ! Т. 8-937-388-50-89.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**58.** Сетку-рабицу, заборы, **ворота** (кованые, распашные, гаражные), ДВЕРИ железные, **ОКНА** пластиковые. Кровля и обшивка домов. Козырьки, навесы. Строительные работы. Д-ка. Установка. Гарантия. **Льготникам скидки.** Т.: 89022881447, 387574. Сайт: metalservis21.ru

**62. Блоки КБ** от 32 руб., **доски** от 5600 руб., песок, ОПГС. Услуги манипулятора. **Доставка.** Т.: 89033455324, 89033222532.

**93. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



**95. ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 8-927-844-15-01.

**98. Бетон,** раствор, фунд **блоки, плиты** перекрытия, перемычки, **крышки** для погреба, доски. Д-ка. Дешево. Т. 89278535732.

**142. ОКНА** – дешево. Т. 89276684382.

**154. Металлочерепицу,** профнастил, металлосайдинг, водостоки. Доставка. Замер. **Строительство.** Т. 8-919-653-43-68.

**158. Прицеп трактора, мотоблока.** Т. 8-905-344-47-35.

**185. Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Скидки. Т. 8-927-846-24-10.

**223. ОКНА, теплицы,** обшивка домов. **Двери** стальные. Гарантия 15 л. Скидки 40%. Т. 89196624097.

**КИРПИЧ**
**более 500 видов и цветов.**
**Газосиликатные блоки**
**ТК «ТЕРМИНАЛ».**
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1,
**тел. 30-55-15,**
г. Новочебоксарск, ул. Промышленная, 41,
**тел. 73-84-12.**

**318. Канашскую гравмассу,** песок, **щебень,** навоз. Т. 89093020958.

**475. КОЗЛЯТ.** Т. 8-909-300-14-75.

**478. БЕТОН.** Доставка. Т. 44-12-37.

### ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 9.00 до 19 ч., сб., воскр. с 9.00 до 13 ч. А: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 8(8352)552733.** *Лиц. ЛО 21-01-001 341 от 17.11.2015г. МЗ ЧР. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**38. Чистка колодцев, скважин,** достанем предметы. Т. 89674715070.

**43. Бурение скважин** «под ключ». Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**152. Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**187. Бурение скважин.** Опыт. Гарантия. Паспорт. Т. 8-906-131-21-24.

**228. Строительные работы** от фундамента до кровли – бани, фасады, заборы. Т. 89373762324.

**238. Бурение скважин на воду.** Быстро. Качественно. Гарантия. Т.: 89603012513, 89279916699.

**466. Потомственный экстрасенс** Алина ФАД, дочь финалиста "Битвы экстрасенсов" Алексея Фада. Помогу в трудной ситуации. Защита, амулеты, обереги. Т. 8-909-300-22-77.

### ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**39. Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**50. Коров, телок.** Т. 8-927-850-85-64.

**147. Бычков, телок, коров, лошадей.** Т. 8-967-794-92-82.

**148. Коров, бычков, телок, лошадей.** Т. 8-905-197-73-36.


## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунтикун, утă уйăхĕн 11-мĕшĕ**

10.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 – Хыпарсем (12+)
11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости (12+)
06.10-07.00, 07.10-08.00, 08.10-09.00, 09.10-09.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 20.10-20.20, 21.10-21.20, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăчăри (12+)
10.10-11.00 Пĕччен мар (12+)
12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
14.20-15.00 Чăваш Ен. Çулсем тата çынсем (12+)
15.20-16.00 Шурăмпуç (12+)
17.20-18.00 Çемье ăшши (12+)
19.20-20.00 Тĕплĕ калаçу (12+)

**Ытларикун, утă уйăхĕн 12-мĕшĕ**

10.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 – Хыпарсем (12+)
11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости (12+)
06.10-07.00, 07.10-08.00, 08.10-09.00, 09.10-09.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 20.10-20.20, 21.10-21.20, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăчăри (12+)
09.20-10.00 Тĕплĕ калаçу (12+)
11.20-12.00 Çемье ăшши (12+)
12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
14.10-15.00 Янра, юрă! (хит-парад) (12+)
15.20-16.00 Ачалăх урхамахĕ (6+)
17.20-18.00 Çĕр сум (12+)
18.20-19.00 Тăван ăс-хакăл (12+)
19.10-20.00 Асăмри юрăсем (12+)
20.10-21.00 Тата мĕн кирлĕ пурнăçра? (12+)

**Юнкун, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ**

ПРОФИЛАКТИКА с 08.00-20.00
06.00, 07.00 20.00, 22.00 – Хыпарсем (12+)
21.00, 23.00 – Новости (12+)
06.40-07.00 Республика сасси (12+)
06.10-07.00, 07.10-08.00 20.10-20.20, 21.10-21.20, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăчăри (12+)
22.20-23.00 Республика сасси (12+)

**Кĕçнерникун, утă уйăхĕн 14-мĕшĕ**

06.00, 07.00, 10.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 – Хыпарсем (12+)
08.00, 09.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости (12+)
06.40-07.00 Республика сасси (12+)
06.10-07.00, 07.10-08.00, 08.10-09.00, 09.10-09.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 20.10-20.20, 21.10-21.20, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăчăри (12+)
09.20-10.00 Республика сасси (12+)
12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
14.10-15.00 Тата мĕн кирлĕ пурнăçра? (12+)
15.10-16.00 Асăмри юрăсем (12+)
17.20-18.00 Вĕрентекен сăмахĕ (6+)
18.20-19.00 Тăван ăс-хакăл (12+)
19.20-20.00 Çĕр сум (12+)

**Эрнекун, утă уйăхĕн 15-мĕшĕ**

06.00, 07.00, 10.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00 – Хыпарсем (12+)
08.00, 09.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00 – Новости (12+)
06.40-07.00 Республика сасси (12+)
06.10-07.00, 07.10-08.00, 08.10-09.00, 09.10-09.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 20.10-20.20, 21.10-21.20, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăчăри (12+)
09.20-10.00 Республика сасси (12+)
10.20-11.00 Тăван ăс-хакăл (12+)
11.20-12.00 Литература çӳпçинчен (12+)
12.10-13.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
14.20-15.00 Точка зрения ЛДПР (12+)
15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ (12+)
16.20-17.00 Экстренный час (16+)
19.10-19.40 Присягая Родине (12+)
19.40-20.00 Кулăш лаççи (12+)
20.05-24.00 Каçхи микс (12+)

**Шăматкун, утă уйăхĕн 16-мĕшĕ**

06.00-06.20, 07.00-7.20, 08.00-08.20, 09.00-09.20, 10.00-10.20, 11.00-11.20, 14.00-14.20, 15.00-15.20, 16.00-16.20, 17.00-17.20, 18.00-18.20, 19.00-19.20, 20.00-20.20, 20.10-21.20, 22.00-22.20, 23.00-23.20 Юрă вăчăри (12+)
07.20-08.00 Литература çӳпçинчен (12+)
08.20-09.00 Голос Республики (12+)
10.20-11.00 Символ веры (12+)
12.00-12.10, 16.00-16.10, 20.00-20.10 Новости (Хыпарсем) (12+)
12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
14.20-15.00 Экстренный час (12+)
15.00-15.10 Пичет тишкерĕвĕ (12+)
15.20-16.00 Мăшăр çунат (12+)
16.10-16.20 Обзор прессы (12+)
17.20-18.00 Шурăмпуç (12+)
19.20-20.00 Уйăхпи юмахĕсем (6+)
20.05-24.00 Каçхи микс (12+)

**Вырсарникун, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ**

06.00-06.20, 07.00-07.20, 08.00-09.00, 09.10-09.20, 10.10-10.20, 11.10-11.20, 14.10-14.20, 15.10-15.20, 16.10-16.20, 17.10-17.20, 18.10-18.20, 19.10-19.20, 20.10-20.20, 21.10-21.20, 22.10-22.20, 23.10-23.20 Юрă вăчăри (12+)
06.20-07.00 Республика сасси (12+)
07.20-08.00 Символ веры (12+)
08.20-09.00 Присягая Родине (12+)
09.20-10.00 Шурăмпуç (12+)
12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем (12+)
15.20-16.00 Голос Республики (12+)
16.20-17.00 Кулăш лаççи (12+)
19.00-20.00 Янра, юрă! (хит-парад) (12+)
20.05-24.00 Каçхи микс (12+)

